27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945
МАРТ
16
ЭРНЕКУН
50(1801) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТӐН 13-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 13-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ДАНЦИГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре Висла шывӗн хӗвелтухӑҫ хӗррипе ҫурҫӗрелле наступлени туса пырса, РАЙМЕРСВАЛЬДЕ, НОЙТАЙХЕРВАЛЬДЕ, ФИРЦЕНХУБЕН, БРЕСКЕРФЕЛЬД, ПРАНГЕНАУ, НОЙКИРХ, ПАЛЬШАУ ялӗсене туртса илнӗ.

ГДЫНЯ хулинчен ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре пирӗн ҫарсем РЕДА, ПОЛХАУ, БРЕЗИН, ОСЛАНИН, РУТЦАУ, ГНЕЗДАУ, ШВАРЦАУ, ХАЛЛЕРОВО, ХЛАПАУ ялӗсене туртса илнӗ. Мартӑн 12-мӗшӗнче ку районра 1.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

БЕЛОРУССИРИ 1-мӗш фронтра КИСТЖИНЬ (КЮСТРИН) хулипе крепоҫӗшӗн пынӑ ҫапӑҫусенче 3.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнисем хушшинче КИСТЖИНЬ крепоҫӗн коменданчӗ—КРЮГЕР полковник пур.

ВЕНГРИРЕ, БАЛАТОН кӳллинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата хӗвелтухӑҫнерехре, нимӗҫсем, хӑйсен ҫарӗсем пысӑк ҫухатусем тӳсеҫҫӗ пулин те, танксемпе пехотӑн пысӑк вӑйӗсемпе ҫаплах атакӑсем тунӑ. Мартӑн 12-мӗшӗнчи ҫапӑҫусенче пирӗн артиллери ку районра нимӗҫсен 45 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине пӗтерсе тӑкнӑ. Унсӑр пуҫне тата пирӗн минӑсем ҫине пырса кӗрсе тӑшманӑн 50 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппи сирпӗнсе кайнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ тата чылай пунктсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ.

Мартӑн 12-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 134 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 9 самолетне персе ӳкернӗ.

МАРТӐН 14-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Мартӑн 14-мӗшӗнче КЕНИГСБЕРГ хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре Белоруссири 3-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшман ҫарӗсен Хӗвелтухӑҫ Пруссири ушкӑнне пӗтерсе тӑкасшӑн ҫапӑҫса, малалла талпӑнса пынӑ. ГРОСС КЛИНГБЕКК, ГРЮНВИЗЕ, ЛАНК, БАРТЛАНГЕН, ХИРШКЕН, ХОНСВАЛЬДЕ, ГРОСС ЛЮДТКЕНФЮРСТ, ШЕНЛИНДЕ, КЕНИГЛИХ РЕДЕРСДОРФ, ХОЕНВАЛЬДЕ, БРАЙТЛИНДЕ, ЛИНДЕНАУ ятлӑ халӑх пурӑнакан пунктсене тата ФОГЕЛЬЗАНГ чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Фронт ҫарӗсем 2.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, КАРПАТ тӑвӗсен тӑрӑхӗнчи сӑртлӑ-вӑрманлӑ вырӑнта тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗнтерсе пырса, мартӑн 14-мӗшӗнче ЗВОЛЕН хулипе паха чугун ҫул узелне—нимӗҫсен ГРОН шывӗ ҫинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пунктне—туртса илнӗ, ҫавӑн пекех тата ЛЕСКОВЕЦ, МУСТЕВА, МОЗОЛЕВЦЫ, ДОБРА НИВА, БАНСКА, БЕЛА, ТЕПЛА, РЕПИШТЕ, ПОВОЖАН ялӗсене йышӑннӑ.

ВЕНГРИРЕ, БАЛАТОН кӳллинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата хӗвелтухӑҫнерехре, пирӗн ҫарсем тӑшман танкӗсемпе пехотин атакисене ӑнӑҫлӑн сире-сире янӑ. Мартӑн 13-мӗшӗнче пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче ку районра пирӗн артиллери нимӗҫсен 39 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине пӗтерсе тӑкнӑ. Унсӑр пуҫне тата пирӗн минӑсем ҫине пырса кӗрсе, тӑшманӑн 46 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппи сирпӗнсе кайнӑ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн ҫапӑҫнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Мартӑн 13-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗҫсен 137 танкӗпе хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 37 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

ПИРӖН АВИАЦИ ВЕНГРИРИ ВЕСПРЕМ ЧУГУН ҪУЛ УЗЕЛНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартӑн 14-мӗшӗ ыран тенӗ чух ҫӗрле пирӗн йывӑр бомбардировщиксем Венгрири Веспрем чугун ҫул узелне пырса ҫапнӑ. Бомбӑсем пӑрахнине пула, чугун ҫул узелӗн территорийӗнче пушарсем тухнӑ. Пушарсенче вӑйлӑ взрывсем пулнӑ.

☆ ☆ ☆

Кенигсберг хулинчен кӑнтӑр-хӗвеланӑҫнерехре Белоруссири 3-мӗш фронт ҫарӗсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла талпӑнса пынӑ. Тинӗс хӗррине хӗстерсе лартнӑ нимӗҫ ҫарӗсем, хӑйсен аллинче тӑрса юлнӑ Хӗвелтухӑҫ Пруссири пӗр участока алран ярас мар тесе, пӗтӗм вӑя хурса ҫапӑҫаҫҫӗ. Гитлеровецсем ҫӗнӗ рет траншейӑсем чаваҫҫӗ, кунти ялсене те ҫирӗплетнӗ, хӑйсен оборонин малти хӗррине пымалли вырӑнсенче тӑрӑшӗнех минӑсем лартса тухнӑ. Юлашки кунсенче ҫунӑ ҫумӑрсене тата ӑшӑ ҫанталӑка пула, юр хытӑ ирӗлме пуҫланӑ. Айлӑм вырӑнсене пурне те шыв илнӗ. Совет чаҫӗсем, артиллери хӑватлӑн персе пулӑшса пынипе хаяррӑн ҫапӑҫнӑ хыҫҫӑн, малалла кайнӑ та хирӗҫ тӑмалли паха узел пулса тӑракан Ланк ялӗнчен нимӗҫсене сирпӗтсе кӑларнӑ. Тепӗр участокра пирӗн пехотинецсем Браунсберг хулинчен 9 километр кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ларакан Фогельзанг чугун ҫул станцине туртса илнӗ. Кун каҫиччен пулса иртнӗ ҫапӑҫусенче тӑшманӑн 4.000 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тӑкнӑ. Фронт ҫарӗсем нимӗҫсенчен 50 тупӑ, 23 миномет, 160 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнӗ.

* * *

Украинӑри 2-мӗш фронтӑн Карпат тӑвӗсем хушшинче кӗрешекен ҫарӗсем, тӑшманпа ҫапӑҫса, малалла куҫса пыраҫҫӗ. Паян пирӗн ҫарсем нимӗҫсен Грон шывӗ ҫинчи оборонин вӑйлӑ тӗреклетнӗ пункчӗ пулса тӑракан Зволен хулине туртса илнӗ. Зволен хули патне пымалли вӗҫӗтри тата ҫывӑхри вырӑнсенче тӑшман ҫирӗп оборона туса хатӗрленӗ. Тусен айккисенче нимӗҫсем артиллери позицийӗсемпе пулемет йӑвисем туса тултарнӑ, вара ҫавӑнтан хула патне пымалли вырӑнсене тӗл персе тӑнӑ. Ҫулсем ҫинче танксене чармалли сарлака канавсем чавса пӗтернӗ. Тӑшман ку районра хӑйӗн пехотин тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен артиллерийӗн пысӑк вӑйӗсене пухса тӑратнӑ. Вӑйлӑ ҫапӑҫу хыҫҫӑн совет чаҫӗсем тӑшман хирӗҫ тӑнине ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та, Мустева ялне туртса илсе, Зволен чугун ҫул станцийӗ патне татса тухнӑ. Унтан вара тӑшманпа хула урамӗсенче ҫапӑҫма тытӑннӑ. Ҫухатнӑ позицисене каялла туртса илме хӑтланса, нимӗҫсем темиҫе контратака та тунӑ, анчах нимӗнле ҫӗнтерӳ те тӑвайман. Пирӗн ҫарсем, тӑшмана вӑйлараххӑн та вӑйлараххӑн пыра-пыра ҫапса, Грон леш енне ывӑтса янӑ та Зволен хулине пӗтӗмӗшпех йышӑннӑ. Хулана пырса кӗмелли ҫулсем ҫинче тата хула урамӗсенче тӑшман виллисем нумай выртса юлнӑ. Трофейсем тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

Зволен хули 4 чугун ҫул тата темиҫе шоссе ҫулӗсен узелӗ пулса тӑрать. Хулари промышленность предприятийӗсем тимӗр рудинчен тӗрлӗ япаласем туса кӑлараҫҫӗ. Ҫав тимӗр руди ку районра питӗ нумай.

* * *

Венгрире, Балатон кӳллинчен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата хӗвелтухӑҫнерехе, пирӗн ҫарсем нимӗҫсен атакисене ӑнӑҫлӑн сире-сире янӑ. Тӑшман, хӑйӗн салтакӗсем питӗ нумай пӗтнине пӑхса тӑмасӑрах, кунти ҫапӑҫусене танксемпе пехотӑна кӗрте-кӗрте ярать. Пирӗн чаҫсем тӑшман хӗснине вӑйлӑн сирсе тӑраҫҫӗ, мӗнпур тӗрлӗ хӗҫпӑшалпа персе, атакӑна кӗрекен нимӗҫсен речӗсене ҫула-ҫула пӑрахаҫҫӗ. Паян пӗр ялшӑн хаяр ҫапӑҫусем пулса иртнӗ. Нимӗҫсен танкӗсемпе пехоти, хӑйсен вӑйӗсем ҫав тери нумай пӗтнӗ хыҫҫӑн, ҫав яла кӗрсе кайнӑ. Ял урамӗсенче вӑйлӑ ҫапӑҫу пуҫланнӑ. Совет артиллерисчӗсем тата бронебойщиксемпе стрелоксем 600 гитлеровеца ытла вӗлерсе пӗтернӗ, 24 танкпа хӑй тӗллӗн ҫӳрекен виҫӗ туппа ҫунтарса янӑ е персе ҫӗмӗрнӗ. Каҫ пулса килнӗ тӗлелле пирӗн чаҫсем нимӗҫсене хӑйсене вӑйлӑн пырса ҫапнӑ та ялтан каялла хӑваласа кӑларнӑ. Ҫапла ку ял пирӗн чаҫсен аллинчех юлнӑ. Тепӗр участокра 23 совет боецӗ, гварди кӗҫӗн лейтенанчӗ Мыльников ертсе пынипе, боевой хуралта тӑнӑ. Тӑшман, ҫав боецсен позицине туртса илме хӑтланса, виҫӗ хутчен атакӑна кӗре-кӗре кайнӑ. Нимӗҫсем совет боецӗсене ҫавӑрса илнӗ, анчах та пирӗн боецсем, унка лекнӗ пулин те, малтанхи пекех хаяррӑн ҫапӑҫнӑ. Вӗсем хӑйсен позицине пулӑшу пырса ҫитиччен алран яман. Ҫав позици умӗнче пирӗн гвардеецсем нимӗҫсен 100 виллине ытла шутласа тухнӑ. Пӗр районра пирӗн боецсен пӗчӗк ушкӑнӗ шыв ҫинчи кӗпере сыхласа тӑнӑ. Нимӗҫсен танкӗ тата хӑй тӗллӗн ҫӳрекен икӗ туппи ҫав кӗпер ҫине пырса кӗме хӑтланнӑ. Старши лейтенант Иваницкий, танксене пемелли граната вӑркӑнтарса, нимӗҫсен танкне сирпӗнтерсе янӑ. Бессараб сержант, танксене пемелли пӑшалпа персе, гитлеровецсен хӑй тӗллӗн ҫӳрекен туппине ҫунтарса янӑ. Фалюков красноармеец, гранатӑна лайӑх вӑркӑнтарса, тӑшманӑн тепӗр туппине те ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

* * *

Белоруссири 1-мӗш фронтра пирӗн авиаци тӑшман ҫарӗсене тата вӗсен ҫулҫӳревӗсене пыра-пыра ҫапнӑ. Пирӗн сывлӑшри разведка Одер шывӗн анат тӑрӑхӗнче тӑшманӑн темиҫе пысӑк баржине курнӑ. Часах ҫав баржӑсем тӗлне Прошин капитан ертсе пыракан штурмовиксем вӗҫсе ҫитнӗ. Совет летчикӗсем 200 нимӗҫ салтакӗпе офицерӗ ытла ларса пыракан тата 30 автомашинӑпа 7 тупӑ тиенӗ баржӑна шыва путарнӑ.

Пирӗн район вӑрман хатӗрлевӗнче мӗнле ӗҫлет

КУСЛАВККА. Вӑрман хатӗрлевӗнче уйӑх ҫурӑ хушши фронтри пек ӗҫлесе, пирӗн район пысӑк ҫитӗнӳ турӗ. Кӗркуннепе хӗллехи вӑхӑтра вӑрман хатӗрлемелли плана эпир мартӑн 10-мӗшӗ тӗлне касас енӗпе 116 процент, турттарас енӗпе 104 процент тултартӑмӑр.

Кунта эпир ҫав ҫитӗнӗве мӗнле туни ҫинчен каласа кӑтартас тетӗп. Уйӑхлӑх ҫинчен пӗлтерсенех ял Совет председателӗсемпе колхоз председателӗсен канашлӑвне ирттертӗмӗр. Вӑрман хатӗрлевне мӗнле йӗркелесси ҫинчен тӗплӗн сӳтсе яврӑмӑр. Ӗҫ вӑйне графикпа палӑртнӑ чухлех пырса тӑмалла,—ҫакӑн пек задача лартрӑмӑр кашни колхоз председателӗ умне.

Колхозсем вӑрмана лашасемпе ҫынсене ҫителӗклӗ ярса тӑчӗҫ. Вӑрманта ӗҫлекенсене уйрӑм бригадӑсене пӗтӗҫтерчӗҫ. Бригадӑсене ертсе пыма пултаруллӑ ҫынсене уйӑрчӗҫ. Лашасем валли фураж, ҫынсем валли апат-ҫимӗҫ колхозсенчен пӗр чӑрмавсӑр парса тӑчӗҫ.

Вӑрманта ӗҫлекен бригадӑсемпе колхозниксем пӗр-пӗрнипе социализмлӑ ӑмӑртӑва тухрӗҫ. Кашни колхоз вӑрман хатӗрлемелли плана срокчен тултарма пулчӗ. Район пӗтӗмӗшпе плана Хӗрлӗ Ҫар уявӗччен тултарма обязательство илчӗ.

Хӗрлӗ Ҫара панӑ сӑмаха пурнӑҫа кӗртессишӗн кашни колхоз тӑрӑшса ӗҫлерӗ. Вӑрман хатӗрлевӗ мӗнле пынине ятарласа янӑ уполномоченнӑйсем, колхоз председателӗсем хӑйсем те тӑтӑшах тӗрӗслесе тӑчӗҫ. Юлса пыракан колхозсем ҫумне район уполномоченнӑйпе вӑрманпромхоз работникӗсене ҫирӗплетнӗ.

Кун каҫиччен тунӑ ӗҫе каҫсерен пӗтӗҫтерсе пӑхса тухнӑ. Малта пыракансене мухтанӑ, вӗсен ячӗсене кӑтарту хӑми ҫине кӗртнӗ, юлса пыракансене ятланӑ. Массӑллӑ ӑнлантару ӗҫне лайӑх йӗркеленӗ, стена хаҫачӗсем кӑларса тӑнӑ.

Ӗҫе ҫапла йӗркеленине пула, вӑрманта ӗҫлекен кашни ҫын хӑйӗн нормине тултарассишӗн кӗрешрӗ. Вӑрман касакансем Пименова Гуния («Большевик» колхозран), Портнова (Партин 16-мӗш съезчӗ ячӗпе тӑракан колхозран) икшер норма тултарса пычӗҫ. Вӗсене вӑрманпромхозӑн куҫса ҫӳрекен пӗчӗк Хӗрлӗ Ялавӗсене тата премисем панӑ. «Большевик» колхоз хӑйӗн заданине касас енӗпе ноябрьтех, турттарас енӗпе январьте тултарчӗ. Вутӑ турттаракан бригадӑсен бригадирӗсем Павлов (Калинин ячӗпе тӑракан колхозран), Платонов (Ленин ячӗпе тӑракан колхозран) нормӑран 1,5 хут тухӑҫлӑрах ӗҫленӗ.

«Динамо», «Правда», «Дружба», «Спартак», Ленин, Калинин ячӗсемпе тӑракан колхозсем вӑрман ӗҫне февраль пуҫламӗшӗнчех вӗҫлерӗҫ. Вӑрман хатӗрлевӗн планне касас енӗпе 52 колхоз, турттарас енӗпе 47 колхоз срокчен тултарчӗҫ.

Чылай колхозсем вӑрманта ӗҫлеме хӑйсен заданийӗсене тултарнипех пӑрахмарӗҫ, заданирен ирттерсе вутӑ хатӗрлеҫҫӗ. Сӑмахран, «Динамо» колхоз заданирен ирттерсе 200 кубометр вутӑ турттарса панӑ. Иккӗмӗш кварталшӑн районӗпе пурӗ 2200 кубометр хатӗрленӗ, 800 кубометр турттарнӑ.

Пирӗн районран вӑрмана ӗҫлеме кайнӑ колхозниксем халӗ иккӗмӗш квартал планне те срокчен тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ.

К. ЛУНИН,
Райсовет исполком председателӗн заместителӗ.

Пӗрремӗш кварталти финанс планне пӗтӗмпех тултармалла

Фронтпа ҫӗршыва укҫа-тенкӗ вӑхӑтра тата тӑтӑшах парса тӑни тӑшмана ҫӗнтерес куна ҫывхартма пулӑшать. Ҫакна асра тытса, пирӗн республикӑри финанс работникӗсем укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫар уявӗ умӗнхи социализмлӑ ӑмӑртура малта пыракан финанс органӗсем ӗҫре чылай ҫитӗнӳсем турӗҫ. Куславкка районӗ ҫак ҫулӑн 1-мӗш кварталӗнче укҫа-тенкӗ пухмалли плана мартӑн 1-мӗшӗ тӗлне 72.8 процент тултарчӗ. Шупашкар, Канаш, Улатӑр тата Ҫӗмӗрле хулисенче те укҫа-тенкӗ пухас ӗҫ начар мар пырать. Юлашки уйӑхсенче Вӑрнар, Калинино, Вӑрмар, Елчӗк т. ыт. районсенче те ҫак ӗҫ вӑйланми пырать.

Асӑннӑ районсемпе хуласенчи финанс работникӗсем доходсен планне пӗтӗмӗшпе кӑна мар, кашни тӳлев тӑрӑх тултарассишӗн кӗрешеҫҫӗ. Партипе совет органӗсем финанс работникӗсен ӗҫне тӑтӑшах тӗрӗслесе, вӗсене пулӑшу парса тӑраҫҫӗ.

Куславкка райсовечӗн исполкомӗ (председателӗ Прытченков юлташ) ҫӗнӗ ҫула кӗнӗренпе финанс работникӗсен, ял Совет председателӗсен канашлӑвне икӗ хутчен ирттернӗ. Ҫав канашлусенче укҫа-тенкӗ пухмалли плана ӑнӑҫлӑн тултарас тӗлӗшпе мӗн тумаллине тӗплӗн палӑртнӑ, кашни налог агентне ӗҫ графикӗ туса панӑ. Графиксем пурнӑҫа мӗнле кӗрсе пынине райфо заведующийӗ Герасимов юлташ тӗрӗслесех тӑрать. Юлса пыракан ял Совечӗсемпе райсовет исполкомӗн председателӗ Прытченков юлташ хӑй ӗҫлет: вӗсене кӑтартусем парса тӑрать, ӗҫ мӗнле пынине кашни кун телефон тӑрӑх ыйтса пӗлет.

Унсӑр пуҫне, ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ учрежденисемпе предприятисен руководителӗсен тата бухгалтерсен канашлӑвне ирттерчӗ. Унта Виҫҫӗмӗш Военнӑй Заема, укҫапа япаласен тӑваттӑмӗш лотерейин билечӗсене сарнин итогӗсене пӑхса тухнӑ. Канашлура пулнисем умне рабочисемпе служащисенчен налогсемпе ирӗклӗ взноссене вӑхӑтра тытса юлса, вӗсене ҫийӗнчех государство банкне куҫарса тӑрас задача лартнӑ, бюджета пур обязательствӑсем тӑрӑх та тултарма кирли ҫинчен ӑнлантарса панӑ.

Ӗҫе ҫапла йӗркеленине пула, район укҫа-тенкӗ пухас тӗлӗшпе республикӑра малта пырать. Кунта налог енӗпе парӑмлисем нумай мар. Рабочисемпе служащисене ӗҫукҫи йӗркеллӗ парса тӑраҫҫӗ. Район Чӑваш АССР Совнаркомӗпе Финанс Халӑх Комиссариатӗнчен бюджета пысӑклатма е ссуда пама, хӑшпӗр районсем час-часах ыйтнӑ пек, ыйтмасть.

Елчӗк, Етӗрне, Вӑрнар тата Ҫӗрпӳ районӗсенче те укҫа-тенкӗ пухмалли плана тултарас тӗлӗшпе чылай аван ӗҫлеҫҫӗ.

Анчах та республикӑра, пӗтӗмӗшпе илсен, укҫа-тенкӗ пухас ӗҫ ҫителӗксӗр пырать: 1-мӗш квартал планне мартӑн 1-мӗшӗ тӗлне 45,7 процент ҫеҫ тултарнӑ. Кутарниччен малта пынӑ Сӗнтӗрвӑрри, Октябрьски, Советски, Шупашкар, Тӑвай районӗсем, Чӑваш АССР Совнаркомӗн премийӗсене илнӗскерсем, юлашки вӑхӑтра юлса пыраҫҫӗ. Мӗнрен килет-ха ку? Ҫитӗнӳсене пула лӑпланса ларнинчен килет. Райсовет исполкомӗсем ҫакна кураҫҫӗ ӗнтӗ, анчах ӗҫе вӑйлатас тесе нимӗнле мерӑсем те йышӑнмаҫҫӗ. Асӑннӑ районсем куллен тӑрӑшса ӗҫлесе мар, штурмласа плана тултарма пӑхаҫҫӗ. Анчах та ун пек чух ытлашши хытӑрланисем, законсене пӑснисем пулма пултараҫҫӗ. Вӗсене тума юрамасть.

Кувакино, Хӗрлӗ Чутай, Комсомольски, Шӑхасан, Сӗнтӗр, Канаш тата Первомайски районсенче 1-мӗш квартал планне 16 процентран пуҫласа 30 процент таран ҫеҫ тултарнӑ. Ҫак «ӳсӗме» вӗсем икӗ уйӑх хушшинче тунӑ. Кунашкалах ӗҫлесен, 1-мӗш квартал планне хӑҫан тултарӗҫ-ши вӗсем?

Укҫа-тенкӗ ҫӗршывпа фронта хӗҫпӑшал пекех, тырпул пекех кирлӗ. Ӑна вӑхӑтра пухса парассишӗн финанс работникӗсем партипе правительство умӗнче ответлӑ пулса тӑраҫҫӗ. Юлса пыракан районсенчи партипе совет руководителӗсен, финанс работникӗсен ҫак ответлӑха туймалла. Вӗсен укҫа-тенкӗ пухас ӗҫе мӗнле йӗркелемеллине Куславкка районӗнчен вӗренмелле. Пӗрремӗш кварталти финанс планне пӗтӗмпех тултармалла. Ҫавна тума пирӗн майсем пур.

И. ЗОЛОТНИКОВ,
Чӑваш АССР Финанс Халӑх Комиссарӗ.

Шупашкар хулинчи комсомол организацийӗн конференцийӗ

Ҫак кунсенче комсомолӑн Шупашкар хулинчи организацийӗн VIII-мӗш конференцийӗ пулса иртрӗ. Конференци ВЛКСМ Шупашкар хула комитечӗн отчетлӑ докладне итлесе сӳтсе яврӗ тата ВЛКСМ хула комитечӗн ҫӗнӗ составне суйласа хӑварчӗ. Малтанхи ыйтупа ВЛКСМ Шупашкар хула комитечӗн секретарӗ Трусова юлташ доклад туса пачӗ.

— Отечественнӑй вӑрҫӑ ҫулӗсенче,—тет докладчик,—хулари комсомолецсен политикӑллӑ тата производствӑри активлӑхӗ нумай ӳсрӗ. Комсомолецсем ӗҫре союзра тӑман ҫамрӑксене пример кӑтартса ӗҫлеҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл комсомол организацийӗсен авторитетне нумай ӳстерчӗ. Отчетлӑ тапхӑрта, 1943 ҫулхи май уйӑхӗнчен пуҫласа, комсомолӑн хулари организацийӗн ретне 3.135 ҫамрӑка илнӗ, 428 комсомолец большевиксен партийӗн ретне кӗме тивӗҫлӗ пулнӑ.

Тӑван ҫӗршывпа фронт валли ытларах продукци туса кӑларас тесе, комсомолецсем ырми-канми ӗҫлеҫҫӗ. Хулари предприятисенче комсомолецсемпе ҫамрӑксен 259 бригади ӗҫлет, вӗсенчен 75-ӗшне фронтовой бригадӑсен ятне панӑ. Нумай комсомолецсем ӗҫ нормине 2—3 хут ирттерсе тултараҫҫӗ. Отчетлӑ тапхӑрта комсомолеца Чӑваш АССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Хисеплӗ грамотине парса наградӑланӑ, нумай комсомолецсем орденсемпе медальсем илме тивӗҫлӗ пулчӗҫ.

Комсомолецсен политикӑллӑ [illegible] ӳстерес тӗлӗшпе хулара 197 кружок ӗҫлет. Иртнӗ ҫулта комсомолецсемпе ҫамрӑксем валли 56 хут лекци ирттернӗ. Нумай комсомолецсем ВКП(б) историйӗн кӗске курсне тата Сталин юлташӑн «Совет Союзӗн Отечественнӑй аслӑ вӑрҫи ҫинчен» ятлӑ кӗнекине харпӑрхӑй тӗллӗн вӗренеҫҫӗ.

Ҫакӑнпа пӗрлех комсомол организацийӗсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем пур-ха. Комсомолецсем хушшинче марксизм-ленинизм теорине, большевиксен партин историне, СССР историне тата производствӑпа техника ӗҫне вӗренессине ҫителӗксӗр йӗркеленӗ. Комсомолецсем хушшинче дисциплинӑна пӑхӑнманни, харпӑрхӑйне тивӗҫсӗр тыткаланни те пур. Отчетлӑ тапхӑрта 39 комсомолец член билечӗсене ҫухатнӑ. Ҫаксем пурте комсомолецсем хушшинче политикӑллӑ воспитани ӗҫне ҫителӗксӗр туса пынинчен килнӗ.

Комсомолӑн хула комитечӗ уйрӑмӑнах чӑваш ҫамрӑкӗсем хушшинче начар ӗҫлесе пынӑ. Хӑшпӗр заводсемпе предприятисенче ҫурри ытла чӑваш ҫамрӑкӗсем ӗҫлеҫҫӗ, анчах вӗсене валли тӑван чӗлхепе докладсемпе лекцисем туса ирттермен, вӗсен пурнӑҫпа йӑла условийӗсене лайӑхлатас тӗлӗшпе начар ӗҫленӗ.

Комсомолӑн хула комитечӗ шкул ачисем хушшинче вӗренӳ пахалӑхне ҫӗклес тата дисциплинӑна ҫирӗплетес тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленӗ. Пионерсен дружинисене, вожатӑйсене кирлӗ пек пулӑшса пыман. Комсомолӑн шкулсенчи организацийӗсем питӗ хуллен ӳсеҫҫӗ. Хулари пионерсен ҫурчӗ хӑйӗн ӗҫне кирлӗ пек туса пымасть.

ВЛКСМ хула комитечӗ комсомолецсене вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентес тӗлӗшпе начар мар ӗҫленӗ. Всевобуч пункчӗсем урлӑ комсомолецсенчен пиншер снайпер, автоматчиксем, пулеметчиксем вӗрентсе кӑларнӑ. Унсӑр пуҫне телеграфистсем, медицина сестрисем нумай вӗрентсе хатӗрленӗ. Всевобучӑн 6-мӗшпе 7-мӗш черечӗсенчи боецсем Хӗрлӗ Ҫар фондне 50.155 тенкӗ укҫа пухса панӑ. 1943 ҫулта хулари комсомолецсем фронтовиксем патне 1.204 парне тата Балтика флочӗн морякӗсем патне 550 парне янӑ. Шкул ачисемпе пионерсем эмел тумалли курӑксем 20 тонна ытла пухса панӑ.

Анчах хулара физкультурӑпа спорт ӗҫне кирлӗ пек туса пымаҫҫӗ-ха. Нумай чухне стадионсемпе площадкӑсем пушах ларасҫӗ. Физкультурӑпа спорт ӗҫне ҫамрӑксен анлӑ массине явӑҫтарман.

Трусова юлташӑн отчетлӑ докладӗ тӑрӑх прениre 22 ҫын тухса каларӗҫ. Вӗсем ВЛКСМ Шупашкар хула комитечӗн ӗҫӗнчи нумай ҫитменлӗхсене палӑртрӗҫ. Комсомол хула комитечӗ ВЛКСМ Центральный Комитечӗн XII-мӗш пленумӗ йышӑннӑ постановлени тата ВЛКСМ Центральный Комитечӗ комсомолӑн Чӑваш республикинчи организацийӗн ӗҫӗсем ҫинчен йышӑннӑ решение пурнӑҫа кӗртсе пырас тӗлӗшпе ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртрӗҫ.

Мохов юлташ комсомол хула комитечӗ ҫамрӑксем хушшинче политикӑллӑ воспитани ӗҫне ҫителӗксӗр туса пынине палӑртарӗ. Хулара ҫамрӑксем валли уйрӑм клуб ҫук. Лекцисемпе докладсем питӗ сахал пулаҫҫӗ. Писательсемпе, артистсемпе тӗл пулни, литература вечерӗсем, диспутсем ирттерни ҫук. Ҫамрӑксен художествӑллӑ пултарулӑх вечерӗсем пулмаҫҫӗ. Хулари «Динамо» клубӗнче ташӑсем кӑна пулса иртеҫҫӗ.

Цветкова юлташ (хӗрачасен 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкулӗ) шкулти комсомолецсемпе пионерсем вӗренӳ пахалӑхне хӑпартассишӗн, дисциплинӑна ҫирӗплетессишӗн мӗнле кӗрешни ҫинчен калать. Комсомолецсем литература тата истори кружокӗнче лайӑх ӗҫлеҫҫӗ, хӑйсен вӑйӗпех лекцисемпе докладсем ирттереҫҫӗ. Пионерсен сборӗсем вӑхӑтра тата лайӑх хатӗрленнипе пулса иртеҫҫӗ.

Агеева юлташ (пӗр заводри ҫамрӑк рабочисен шкулӗн директорӗ) ВЛКСМ хула комитечӗ тата комсомол организацийӗсем ҫамрӑк рабочисен шкулӗсене ҫителӗксӗр пулӑшнине критиклет. Заводра ҫурри ытла ҫамрӑксем, анчах 18 ҫамрӑк ҫеҫ шкулта вӗренеҫҫӗ. Пир-авӑр фабрики ҫумӗнчи ҫамрӑк рабочисен шкулне ҫурҫул ӗҫленӗ хыҫҫӑн салатса янӑ. Комсомол организацийӗсем ҫамрӑк рабочисен пӗлӗвне ӳстерессишӗн ҫителӗксӗр тӑрӑшаҫҫӗ-ха.

Жирнова юлташ (Чӑвашсен академи театрӗ) комсомолецсем хушшинче художествӑллӑ пултарулӑх кружокӗсем начар ӗҫленине, артистсемпе искусство работникӗсене комсомол ӗҫне ҫителӗксӗр хутшӑнтарнине палӑртрӗ.

Конференцире ВЛКСМ Чӑваш Обкомӗн секретарӗ Л. Михайлов юлташ сӑмах тухса каларӗ. Вӑл хулари комсомолецсемпе ҫамрӑксем хушшинче политикӑллӑ воспитани ӗҫне лайӑхлатмалли ҫинчен тата ку ӗҫе хулари интеллигенцие анлӑн хутшӑнтармалли ҫинчен калать. Комсомолӑн хула комитечӗ ФЗО шкулӗсене ҫителӗксӗр пулӑшни, ҫамрӑксем хушшинче физкультурӑпа спорт ӗҫне начар туса пыни ҫинчен чарӑнса тӑрать.

Конференци хупӑнас умӗн ВКП(б) Чӑваш Обкомӗн секретарӗ И. М. Чарыков юлташ пысӑк сӑмах тухса каларӗ. Чарыков юлташ комсомолӑн хулари организацийӗ иртнӗ ҫулта ҫителӗксӗр ӳснине, ку тӗлӗшпе ВЛКСМ хула комитечӗ ҫителӗксӗр ӗҫленине палӑртрӗ. Ҫамрӑксем хушшинче, уйрӑмӑнах хулари заводсемпе предприятисенче ӗҫлекен чӑваш ҫамрӑкӗсем хушшинче политикӑллӑ воспитани ӗҫне начар туса пынине палӑртса, Чарыков юлташ ҫак ӗҫе лайӑхлатмалли майсене кӑтартса пачӗ. Чӑваш республики 25 ҫул тултарнине уявлама хатӗрленнӗ май, республика столицине йӗркелес тӗлӗшпе комсомол организацийӗсем тумалли ӗҫсем ҫинче чарӑнса тӑчӗ.

Конференци, умра тӑракан задачӑсене палӑртса, татӑклӑ решени йышӑнса хӑварчӗ. Комсомолӑн хула комитечӗн составне 37 ҫынран суйларӗ.

* * *

ВЛКСМ хула комитечӗн ҫӗнӗ составӗн организациллӗ пленумӗ комсомолӑн хула комитечӗн пӗрремӗш секретарӗ пулса ӗҫлеме Е. Ф. Агеева юлташа, иккӗмӗш секретарӗ пулса ӗҫлеме О. Н. Игнатьева юлташа тата ҫарӗҫ енӗпе ӗҫлекен секретарӗ пулма А. Г. Гаврилов юлташа суйларӗ.

Пленум ялан ӗҫлекен комиссисен председателӗсене ҫирӗплетрӗ. Пропагандӑпа агитаци енӗпе ӗҫлекен комисси председателӗ пулма А. Г. Моисеева юлташа, культмассӑллӑ ӗҫсен комисси председателӗ пулма И. В. Алексеева юлташа, шкул ачисемпе пионерсем хушшинче ӗҫлекен комисси председателӗ пулма А. Ф. Башкирова юлташа тата ҫар ӗҫӗпе физкультура енӗпе ӗҫлекен комисси председателӗ пулма В. С. Анискевич юлташа ҫирӗплетрӗ.

МОПР организацийӗн республикӑри VI-мӗш конференцийӗ

Ҫак кунсенче Шупашкарта МОПР организацийӗн республикӑри VI-мӗш конференцийӗ пулса иртрӗ.

Конференцире МОПР Чӑваш Обкомӗн ӗҫӗсем ҫинчен Г. Платонов юлташ отчетлӑ доклад туса пачӗ. Виҫӗ ҫул ҫурӑ хушшинче организаци членӗсем хӑйсем хушшинче 295.000 тенкӗ укҫа пухнӑ. Госпитальсене пулӑшас тӗлӗшпе тата аманнӑ боецсене пӑхас тӗлӗшпе сахал мар ӗҫленӗ.

МОПР организацийӗсен ӗҫӗсене лайӑх туса пынӑшӑн Сӗнтӗр районӗ 1943 ҫулта МОПР Обкомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне хӑй аллинче тытса тӑнӑ. Сӗнтӗр районӗнчи мопровецсем ӗҫе сӳрӗклетмен, анчах Октябрьски район социализмлӑ ӑмӑртура мала тухрӗ те Хӗрлӗ Ялава илме тивӗҫлӗ пулчӗ. Ҫавӑн пекех МОПР ӗҫне Сӗнтӗрвӑрри, Калинино, Комсомольски, Ҫӗмӗрле районӗсенче те лайӑх туса пыраҫҫӗ.

Ҫав вӑхӑтрах МОПР-ӑн хӑшпӗр районсенчи комитечӗсем хӑйсен ӗҫне ҫителӗксӗр туса пынӑ. Отчетпа суйлав пухӑвӗсенче ӗҫри ҫитменлӗхсене палӑртса, вӗсене пӗтерес тӗлӗшпе татӑклӑ решенисем йышӑнса хӑварман. Малашне МОПР организацийӗсен комитечӗсене, ячейкисене ҫирӗплетсе вӑйлатмалла, МОПР членӗсен ретне ӗҫҫыннисен анлӑ массине явӑҫтармалла.

МОПР Обкомӗн ревизи комиссийӗн докладне Золотова юлташ туса пачӗ. Вӑл Чкаловски, Вӑрнар, Ҫӗрпӳ, Кувакино тата ытти хӑшпӗр районсенчи МОПР организацийӗсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене критиклерӗ.

Конференци МОПР Обкомӗн ӗҫӗсене лайӑхлатас майпа анлӑ решени йышӑнса хӑварчӗ. МОПР Обкомӗн ҫӗнӗ составне 23 ҫынран суйларӗ. Обком председателӗ пулса ӗҫлеме Г. Платонов юлташа суйлана.

Чӑваш АССР Совнаркомӗнче

Инвалидсен кооперацин артелӗсен тата пурӑнмалли ҫуртйӗр хуҫалӑх предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн февраль уйӑхӗнчи итогӗсем ҫинчен

Чӑваш АССР Совнаркомӗ, инвалидсен кооперацин артелӗсен тата пурӑнмалли ҫуртйӗр хуҫалӑх предприятийӗсен социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1945 ҫулхи февраль уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухса, ҫаксем мала тухнине палӑртнӑ:

Инвалидсен кооперацин артелӗсем енӗпе

Канашри «Красный воин» артель (правлени председателӗ Корчагин юлташ) мала тухнӑ. Вӑл февраль уйӑхӗнче мӗнпур продукци туса кӑлармалли плана 106,5 процент, ӗҫҫыннисене куллен кирлӗ таварсем туса кӑлармалли плана 110,2 процент тултарнӑ. Чӑваш АССР Совнаркомӗн куҫса ҫӳрекен Хӗрлӗ Ялавне, Пӗнерӗри «Помощь» артельрен илсе, Канашри «Красный воин» артеле пама йышӑннӑ тата ӑна 15 пин тенкӗ премия панӑ.

Февраль уйӑхӗнче Пӗнерӗри «Помощь», Шӑхасан районӗнчи «Патрон», Ишлей районӗнчи «Красный стрелок», Сӗнтӗр районӗнчи «Производственник» тата Шупашкарти «Чебторгин» артельсем лайӑх ӗҫленине палӑртнӑ.

Пурӑнмалли ҫуртйӗр хуҫалӑх предприятийӗсем енӗпе

Канашри Колхозник ҫурчӗ (директорӗ Петров юлташ) мала тухнӑ. Колхозник ҫуртне 3 пин тенкӗ премия панӑ.

Шупашкар хулинчи канализаци (заведующийӗ Цветков юлташ). Ӑна 2 пин тенкӗ премия панӑ.

Февраль уйӑхӗнче Етӗрнери коммунальнӑй мунча, Ҫӗмӗрлене пыракансен кӗрсе выртмалли ҫурчӗ тата тасамарлӑхсене тасатакан Ҫӗмӗрлери контора хӑйсен ӗҫӗсене лайӑхлатнине палӑртнӑ.

Республика юбилейне хатĕрленес ĕçе активлăнрах хутшăнар

З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР-ĕ 25 çул тултарнине кĕтсе илме хатĕрленес тĕлĕшпе ĕçлекен юбилей Комиссийĕн председателĕ.

Кăçалхи июнĕн 24-мĕшĕнче Чăваш Автономиллĕ Советлă Социализмлă Республикине туннăранпа 25 çул тултарать. Чăваш халăхĕн пурнăçĕнчи çав паллă кунра республикăри ĕçсыннисем производствăра çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе, фабрикăсемпе заводсен планĕсене тултарнипе тата иртерсе тултарнипе, çуракине ăнăçлăн иртернипе кĕтсе илме тивĕçлĕ. Пирĕн хамăрăн хуласемпе ялсене йĕркелесе илемлетмелле, тăванлă республикăсенчен килекен хăнасене лайăхрах кĕтсе илме хатĕрленмелле. Анчах Чăваш республики 25 çул тултарас ятпа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ заводри инструментальнăй цех, Çĕмĕрле комбиначĕ пуçарса янă социализмлă ăмăртăва ытти фабрикăсемпе заводсем, колхозсем çителĕксĕр сарса пыраççĕ-ха.

Юбилей тĕлне Шупашкарта Чăваш республики 25 çул хушшинче тунă çитĕнӳсене кăтартмалли выставка пулмалла. Пирĕн промышленноçпа ялхуçалăхĕ, халăха çутта кăларас ĕçпе сывлăх ĕç органĕсем, искусство организацийĕсем çав выставкăна уçма хĕрсех хатĕрленме тивĕçлĕ. Анчах выставкăна хăйсĕн стенчĕсен эскизĕсене тăратма тивĕçлĕ 50 организацирен паянхи кун тĕлне 8 организаци кăна тăратнă-ха. Ыттисем экспонатсемпе диаграммăсен списокĕсене çеç панă.

Выставка организацилес тĕлĕшпе ĕçлеме ответлă çынсене 50 организацирен 20-шĕ çеç уйăрнă. Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, промысла кооперацийĕ пек пысăк организацисем нимĕнле плансем те паман-ха. Эпир республикăри ялхуçалăхĕ, пирĕн колхозсем вăрçă вăхăтĕнче тунă пысăк çитĕнӳсене кăтартмасăр хăварма пултараймастпăр. Шупашкарти табак фабрики, Сĕнтĕрвăрринчи судоверфь хăйсем выставкăна хутшăнма пултарайманнине çинчен çырса янă. Анчах кам ирĕк панă-ха вĕсене çав пысăк ыйту çине çапла ответлеме?

Хăшпĕр организацисем, сăмахран, аптечниĕ; промышленность Халăх Комиссариачĕ, Шупашкарти пир-авăр фабрики художниксенчен хăйсен эскизĕсене тата стенчĕсене лайăхрах йĕркелеме ыйтнă. Анчах художниксем, çак ĕçре пулăшас вырăнне, тӳсме çук пысăк хаксем ыйтса лараççĕ. Художниксен Союзĕн, унăн председателĕн Спиридонов юлташăн çакна ăнланса илмелле: халĕ харпăрхăй интересĕшĕн мар, республика 25 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илес шутпа выставкăна мĕнле те пулин лайăхрах йĕркелессишĕн тăрăшмалла.

Шупашкар горисполкомĕ хулана йĕркелесе илемлетмелли плана пурнăçлама çĕре хулари мĕнпур организацисене явăçтарас тĕлĕшпе учрежденисемпе организацисен руководителĕсене икĕ хутчен пухса канашлу кăна туса ирттернĕ. Çав плана халиччен те учрежденисем патне çитермен, ăна горисполкомрах тытса усраççĕ. Республика юбилейне хатĕрленес ĕçе хулари кашни çын хутшăнма хатĕр. Анчах çав ĕçе организацилесе пыракансем çук. Ăна, паллах, горисполком пуçарса пыма тивĕçлĕ.

Хăш çурта мĕнле юсаса сăрласси, хӳмесемпе хапхисене, тротуарсене юсасси, йывăçсем лартасси,—çаксем пурте халĕ ĕнтĕ паллă пулмалла. Кашни Наркоматпа предприяти, кашни организаци руководителĕ, хăйĕн учрежденийĕ е предприятийĕ йĕркеллĕ те илемлĕ пултăр тесен, мĕн тумаллине пĕлсе тăма, çак ĕçе кашни хăйĕн коллективне мобилизацилеме тивĕçлĕ.

Республика юбилейне хатĕрленес тĕлĕшпе Канаш горисполкомĕ те япăх ĕçлет. Унта Ленин тата Красноармейски урамсене чул сарса тухман, тротуарсене хывман-çĕ, тĕп урамсене йывăçсем лартса тухман, пахча картисемпе хӳмесене юсаман.

Юбилей вăхăтĕнче спартакиада тата физкультурниксен парачĕ пулмалла. Анчах профсоюзсен Обкомĕсемпе спорт обществисем ку енĕпе тӳсме çук сӳрĕк ĕçлеççĕ. Профсоюзсен обкомĕсем хутсем çырса кăна лараççĕ-ха.

Чи вăйлă общество пулса тăракан «Буревестник» спорт обществи шыв çинчи станцие тăвас ĕçе хăй çине илме тивĕçлĕ. Анчах çав станцие тумалли расходсен сметине 50 пин тенкĕлĕх палăртса хунă, тĕрĕссипе вара укçа 75 пин тенкĕ кирлĕ пулать.

«Сталинец» обществин стадионне тума смета та палăртса хуман. Общество çак ыйтăва тивĕçлĕ органсем умне çивĕччĕн лартман. Стадиона аплипех хăварма çук. Кунта нумай ĕçсем туса ирттермелле, вăхăт питĕ сахал юлать. Стадион тăвас ĕçе заводри профсоюз комитечĕн, завод дирекцийĕн тата «Сталинец» обществин çине тăрса тытăнмалла.

Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи физкультурăпа спорт ĕçĕсен комитечĕ тата спорт обществисем парадра мĕн чухлĕ çын пуласси çинчен, парадăн пĕтĕмĕшлĕ йĕрки çинчен пĕр-пĕринпе калаçса татăлман. Учительсен союзĕн Обкомĕн ку тĕлĕшпе хăйĕн планĕ, Наркомпросăн хăйĕн планĕ пур. Вĕсем пĕр-пĕринпе ниепле те калаçса татăлайман-çĕ.

Юбилее хатĕрленес ĕçре искусство работникĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Композиторсен союзĕ, поэтсемпе пĕрле республика 25 çул тултарнă ятпа кантата çырма палăртнă. Март уйăхĕ çитрĕ, анчах кантата те туман-ха. Композиторсен союзĕн председателĕ Лисков юлташ ĕç хăй тĕллĕн пулса пырассине шанса ларать. Çавăн пекех выставкăна художниксем те çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. Нумай картинăсем тĕрлĕ хуласенче—Мускавра, Куйбышевра тата ытти çĕрте сапаланса выртаççĕ. Художниксемпе скульпторсем пĕр-пĕтĕм плансăр хăйсем пĕлнĕ пек ĕçлеççĕ.

Районсемпе хуласем тата поселоксем юбилее мĕнле хатĕрленеççĕ-ха? Çĕрпӳ хулинче çав кун тĕлне хулари сада уçмалла, икĕ урама—Ленинпа Советсен Пысăк урамне йывăçсем лартса тухмалла. Вăрмар районĕнче хăшпĕр колхозсем клубсем тата ытти тĕрлĕ обществăлла çуртсем туса пĕтереççĕ. Çапла, сăмахран, «Новая жизнь» колхозра колхоз клубне туса çитерме палăртнă. Колхозниксен пухăвĕнче кашни колхозникĕн кил вырăнĕнче 15-шер тĕп улмуççисемпе çырла йывăççисем лартма йышăннă. Колхозăн хăйĕн лайăх сад пахчипе питомник пур, вăл колхозниксене те лартмалли çамрăк йывăçсем пама пултарать. Çак районрах Кавал тавралăхĕнчи колхозсем гидроэлектростанци туса çитерсе ĕçе яма хатĕрленеççĕ, вĕсем ăна Чăваш республики 25 çул тултарнă ятпа уçаççĕ.

Шăхасан, Ишлей, Октябрьски районсен руководителĕсем те район центрĕсенчи гидроэлектростанцисене туса пĕтерме ĕмĕтленеççĕ. Анчах строительство валли кирлĕ йывăçа хатĕрлесе турттарса хуман, çав ĕç кая юлма пултарать. Вăхăт питĕ сахал юлчĕ.

Улатăр хулинче Чăваш АССР 25 çул тултарнă ятпа тăракан пионерсен лагерьне туса çитерме палăртаççĕ. Улатăр çыннисен çак паха пуçарăвне ырланă, вĕсене стройматериалсем панă. Улатăрти комсомолецсемпе çамрăксен çак ĕçе вĕçне çитермелле, республикăри ытти хуласене пример кăтартмалла.

Гидроэлектростанци тăвас ĕçпе Чурачăк районĕн руководителĕсем уйрăмах интересленме тивĕçлĕ. Сельэлектро конторин вара çĕнĕ района ытларах пулăшмалла.

Республикăри нумай колхозсем, сăмахран, Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Юртакасси колхозĕ, Сĕнтĕр районĕнчи Кĕçĕн Карач колхозĕ, Куславкка районĕнчи Аманик колхозĕ, Шупашкар районĕнчи Шемшер колхозĕ тата ыттисем те, гидроэлектростанцисем тума палăртаççĕ.

Республика 25 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илес тесен, нумай ĕçсем тума май пур. Етĕрне—Шупашкар, Канаш—Чкаловски, Çĕрпӳ—Тĕрлемес çулĕсем тавралăхĕнче пурăнакан колхозниксемпе колхозницăсен çав çулсем çине йывăçсем лартса тухассишĕн тăрăшмалла. Çак ĕçсене пурне те район руководителĕсен пуçарса, ертсе пымалла. Хуласемпе поселоксене, ялсемпе шкул тавраш-ĕсене йывăçсем лартса илемлетме, садсем лартса ĕрчетме пирĕн пысăк майсем пур. Май уйăхĕнче «Сад пахчи кунне» ирттерсе, садсем лартса ĕрчетес ĕçе ялсемпе хуласенчи ĕçсыннисене анлăн явăçтарас пулать.

Республикăри мĕнпур предприятисемпе колхозсем, пĕтĕм общественноçть Чăваш АССР-ĕ 25 çул тултарас ятпа пыракан социализмлă ăмăртăва анлăн хутшăнма тивĕçлĕ. Рабочисемпе колхозниксен, артель членĕсен пухăвĕсенче республика юбилейне кĕтсе илес тĕлĕшпе çĕнĕ, татăклă обязательствăсем йышăнмалла. Фронтовой бригадăсен, стахановсла вахтăсен ĕçне 1945 çулăн çурçулхи планне июнĕн 24-мĕшĕ тĕлне тултарас лозунгпа йĕркелес пулать.

Колхозсемпе МТС-сем республика 25 çул тултарас ятпа пыракан ăмăртăва хутшăнса, çуракине тĕплĕн хатĕрленсе çитме тата ăна агротехника тĕлĕшĕнчен пахалăхлăн туса ирттерме тивĕçлĕ. Çуракки валли вăрлăхсене, инвентаре, тракторсене, туртăм вăйне тĕплĕн хатĕрлесе çитермелле. Вăрлăх çук колхозсене ытти колхозсен вăрлăх парса пулăшмалла. Колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен запасĕсенчен колхозсене кивçен вăрлăх парассине организацилес пулать.

Вăрçă вăхăтĕнче Чăваш республикинчи ялхуçалăхĕ тырпулсен тухăçлăхне чакармарĕ. Республика 25 çул тултарнă тĕле Сталин юлташа çĕнĕ çитĕнӳсем çинчен рапорт парас шутпа, пирĕн татах та ытларах вăй хурса ĕçлемелле.

Политпросвет учрежденийĕсем, радио, пирĕн хаçатсем юбилее хатĕрленес ĕçе сӳрĕк хутшăннă-ха. Вĕсен хăйсен ĕçне чăваш халăхĕн чаплă уявне лайăх хатĕрленсе çитес тĕллеве пăхăнтармалла, ĕçсыннисен пуçарулăхне хускатса, ӳстерсе пымалла, ялсемпе хуласене йĕркелесе илемлетес ĕçе ĕçсыннисен анлă массисене явăçтарассишĕн, художествăлла пултарулăх ĕçне вăйлатассишĕн тăрăшмалла. Республикăри тата районсенчи хаçатсен юбилее хатĕрленес ĕç мĕнле пынине кулленех тĕплĕн çутатса тăмалла.

Вырăнти советсем, хăйсен анлă активĕпе пĕрле, ĕçсыннисен пултарулăхĕн чăн-чăн организаторĕсем пулса тăма тивĕçлĕ.

Рабочисемпе колхозниксем тата пирĕн интеллигенцисем халĕ ĕнтĕ Хĕрлĕ Çар умĕнче парăмлă пулас мар тесе ĕçлеме вĕренсе çитрĕç. Чăваш халăхĕ, хăйĕн юбилейне хатĕрленнĕ май пур çĕрте те вăя хĕрхенмесĕр ĕçлесе, пысăк çитĕнӳсем туса, ылханлă тăшмана çапса аркатма Хĕрлĕ Çара татах та вăйлăнрах пулăшĕ.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ РЕЙН ШЫВĔ УРЛĂ ÇĔНĔ КĔПЕР ХЫВНĂ

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Рейн шывĕн хĕвелтухăç хĕрринче, Ремаген патĕнчи укрепленире, союзниксен çарĕсем, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине çĕнтерсе, Германи территорине 1000 метра яхăн кĕрсе кайнă. Çав укреплени лаптăкĕ халĕ тарăнăшĕпе 7,2 километр, сарлакăшĕпе фронт тăрăх 17 километр шутланать. Гоннеф хулин тулашĕнче тата Гоннинген хулинче çапăçусем пыраççĕ. Союзниксен малти чаçĕсем халĕ Германин питĕ пысăк автострадинчен 4 километрта тăраççĕ.

Мозель шывĕн çурçĕр сыранĕнчи Трирпа Кобленц хушшинчи нимĕçсен аллинчи çĕр лаптăкĕ 6,4 километра çитиех ансарланнă. Саарбургран хĕвелтухăçнерехре союзниксем хĕвелтухăçнелле 4 километра çити кусса, Рувер шывĕ урлă каçса кайнă. Мартăн 12-мĕшĕнче союзниксем 5.416 нимĕçе тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ, американецсен пĕрремĕш армийĕн чаçĕсемпе пĕрле çӳрекенскер, пĕлтернĕ тăрăх, Ходжес генералăн çарĕсем Ремаген çывăхĕнче Рейн шывĕ урлă çĕнĕ кĕпер хывнă. Çав кĕпере союзниксем «Людендорф» чугун çул кĕперне тытса илнĕ хыççăн 96 сехет хушшинче хывнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăн Францири стратегиллĕ авиацийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» йышши 1.350 бомбардировщик Балтика тинĕсĕ хĕрринче Германин вăрçă объекчĕсемпе тинĕс-çар объекчĕсем çине, çавăн пекех тата Майн çинчи Франкфуртпа Рур хушшинчи районра 6 сортировка станцийĕ çине бомбăсем пăрахнă. Бомбардировщиксене 750 истребитель ытла хӳтĕлесе пынă. Çав бомбардировщиксенчен пĕр 650-шĕ Германин Балтика тинĕсĕ хĕрринчи вăрçă объекчĕсене, ытти бомбардировщиксем—сортировка станцийĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 14-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем йĕркерен 21-мĕш хут Берлина тапăннă.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 13-мĕшĕнче кăнтăрла союзниксен авиацийĕ Мюнхенран çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре 50 мильăра ларакан Регенсбург хулинчи çар объекчĕсене тапăннă. Регенсбургпа Мюнхен хушшинчи тата Австри чиккинчи пысăк участокри чугун çулсем çине бомбăсем пăрахнă.

Румыни Правительстви Сталин юлташа янă телеграмма

БУХАРЕСТ, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни Правительстви И. В. Сталин юлташа çакăн пек телеграмма янă:

«Унăн Превосходительствине, СССР Совнаркомĕн Председательне Сталин Маршала.

Чаплă Хĕрлĕ Çар паттăррăн çапăçнине тата Румыни çарĕ пулăшнине пула ирĕке кăларнă Трансильванире Румыни администрацине туса хурасси çинчен Румыни Правительстви ыйтнине Совет Союзĕн Правительстви пурнăçа кĕртме йышăнни Румыни халăхне калама çук хытă савăнтарчĕ. Çав территорие демократиллĕ Румынипе пĕрлештернине ырласа, çав решени Совет Союзĕпе Румыни хушшинчи туслăха çирĕплетес ĕçе питĕ вăйлă пулăшать. Совет Правительствине тата Сирĕн Превосходительствăна Румыни Правительствипе халăхĕ чунтан-чĕререн тав тăваççĕ. Совет Союзĕпе союзниксен чаплă çарĕсемпе пĕрле кĕрешсе, эпир пĕтĕмĕшле тăшмана аркатса тăкас ĕçе вĕçне çитерме тăрăшăпăр».

Телеграмма çине Премьер-Министр Гроза тата Премьер-Министрăн заместителĕпе Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ Татареску алă пуснă.

Çурçĕр Трансильванири уяв

РУМЫНИ ПРАВИТЕЛЬСТВИН КЛУЖ ХУЛИНЧЕ ПУЛСА ИРТНĔ ЛАРĂВĔ

КЛУЖ, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян кунта Çурçĕр Трансильванине Румынипе пĕрлештернĕ ятпа халăхăн пысăк уявĕ пулса иртнĕ. Уява король, П. Гроза премьер-министр ертсе пыракан Румыни правительстви, çавăн пекех СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕ А. Я. Вышинский ертсе пыракан совет представителĕсем пынă. Вокзалта Советпа Румыни çарĕсенчен хисеплĕ хурал тăратнă. Оркестр Румынипе Совет гимнĕсене каласа панă. Король, Румыни правительстви, А. Я. Вышинский, Союзниксен Контроль Комисси Председателĕн заместителĕ Сусайков генерал-полковник тата вĕсемпе пĕрле Союзниксен Контроль Комиссийĕн ответлă сотрудникĕсем кафедральнăй собора кайнă. Çав соборта Румыни патриархĕ Никодим хутшăннипе чаплă богослужени пулса иртнĕ.

Клуж урамĕсемпе площачĕсенче халăх тулланех пулнă. Вĕсем Румынипе Совет ялавĕсене, Пĕрлешнĕ Нацисен ялавĕсене, Сталин портречĕсене тата Румынипе венгер чĕлхипе çырнă лозунгсене çĕклесе тухнă.

Çакăн хыççăн Ирĕклĕх площадĕнче митинг пулса иртнĕ, митингра 100 пин çын ытла пулнă. Премьер-министр Петре Гроза тата Нациллĕ-демократиллĕ Фронт Совечĕн представителĕсем сăмах туса калаçнă. Сăмах туса калаçнă А. Я. Вышинский халăха Çурçĕр Трансильванине Румынипе пĕрлештернĕ ятпа саламланă. Çак историллĕ ĕç Çурçĕр Трансильванипе Румыни халăхĕсем хушшинчи тата Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетме пулăшĕ, тенĕ вăл.

Митинг хыççăн Советпа Румыни çарĕсен парачĕ пулса иртнĕ. Парад хыççăн Клуж хулипе çывăхри ялсенчи халăхăн демонстрацийĕ пулнă. Совет çарĕсем иртсе пынă чухне площадьри халăх çав тери савăнса, Совет Союзĕ ячĕпе тата Сталин Маршал ячĕпе саламлă сăмахсем кăшкăрса каланă. Демонстрантсем çакăн пек лозунгсем çĕклесе пынă: «Сывă пултăр Румынин демократиллĕ правительстви!», «Сывă пултăр ирĕклĕ Çурçĕр Трансильвани!», «Сывă пултăр Сталин Маршал!».

КЛУЖ, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Паян Клуж хулинче Румыни правительствин чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура А. Я. Вышинский юлташ пулнă. Ларăва уçнă Петре Гроза премьер-министр хăйĕн сăмахĕнче çапла каланă: Хĕрлĕ Çар Çурçĕр Трансильванине захватчиксенчен тасатнине пула çеç правительство Çурçĕр Трансильвани столицинче—Клуж хулинче лару туса ирттерме пултарать. Гроза доктор правительство ячĕпе Совет Союзне саламланă. Сталин Маршала тата А. Я. Вышинскине тав тунă.

Унтан А. Я. Вышинский юлташ сăмах тухса калаçнă. Вăл Румыни халăхне, демократиллĕ правительство ертсе пынипе, гитлеризма хирĕç кĕрешес ĕçе ăнăçлăн туса пыма суннă. Вышинский юлташ демократиллĕ пĕрлешӳĕн правительстви Совет Союзĕ умĕнчи хăйĕн обязательствисене пурнăçа кĕртме пултарассине, Çурçĕр Трансильванире пурăнакан халăхсемшĕн пĕртанлăх правы туса хурассине тата Хĕрлĕ Çарăн тылĕнче демократиллĕ йĕрке туса хурассине шанса тăни çинчен каланă. А. Я. Вышинский Румыни правительствине хăйĕн ĕçĕсенче ăнăçу тума суннă.

Ларăва хупса, Петре Гроза çапла каланă: çак вăхăтран ĕнтĕ Çурçĕр Трансильвани Румыни правительствин тытăмне кĕнĕ тесе шутлатăп, тенĕ. Ларура Румынипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх палăрнă.

РУМЫНИН МИНИСТРСЕН СОВЕЧĔ АМНИСТИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ЗАКОН ПРОЕКТНЕ СӲТСЕ-ЯВНИ

БУХАРЕСТ, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Бухарестри радио пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 12-мĕшĕнче Румынин министрсен совечĕ Çурçĕр Трансильванине тепĕр хут тăван çĕршывĕ çумне пĕрлештернĕ ятпа пулса иртекен аслă уяв пирки анлă амнисти парасси çинчен калакан закон проектне сӳтсе-явнă. Çав законăн проектне юстици министрĕ тăратнă. Министрсен совечĕ çавăн пекех тата çĕр реформи çинчен калакан закон проектне те пăхса тухнă. Çав законăн проектĕнче хресчен массисем ыйтнисене хăвăртрах пурнăçлас тесе каланă.

ОБЩИНАСЕН ПАЛАТИНЧЕ ИДЕН ПАНĂ ОТВЕТСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонри радио пĕлтернĕ тăрăх, паян ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Иден, общинăсен палатинче Румыни пирки панă ыйтусем çине ответлесе, Петре Гроза доктор ертсе пыракан коалициллĕ правительствăна епле туса хуни çинче чарăнса тăнă. Ун умĕнхи правительствăн пуçлăхĕ Радеску генерал, хăйĕн пурнăçĕшĕн шикленсе, Англин Бухарестри представителĕсем патĕнче хӳтлĕх шыранă. Радеску генерала Англи представителĕсем хӳтлĕх панине Иден çирĕплетсе каланă. Çавăн пекех Иден—Хĕрлĕ Çарăн тылĕ пулса тăрса Румыни епле вырăн йышăнни пирки те каланă. Германи çарĕ Румынирен тухса кайнă чухне, тенĕ Иден, паллах, «çулйĕрсене сиенлес шутпа хăшпĕр элементсемпе çыхăну тытассине паллă туса хăварнă».

РОАТТПА СУВИЧĂН ФАШИСТЛА УШКĂНĔСЕН ĔÇĔ ТĂРĂХ ЙЫШĂННĂ ПРИГОВОР

ПАРИЖ, мартăн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви Римран пĕлтернĕ тăрăх, Роатт генерал пирки хăйсĕр пуçнех приговор йышăннă, ăна ĕмĕрлĕхе тĕрмене хупса лартмалла тунă. Фашистсен Берлинри посолне Анфузăна вĕлермелле тунă. Сувича тата Албанире пулнă Якомони наместника 24 çул хушши тĕрмере усрамалли приговор йышăннă. Париани генерала, Çурçĕр Италире пурăнаканскере, хăйсĕр пуçнех 15 çул хушши тĕрмере лармалла тунă. Наоло Анджиолине (çавăн пекех хăйсăр пуçне) 20 çуллăха тĕрмене хупмалли приговор йышăннă.

БЕЛЬГИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ УЙРĂМ ПОЛНОМОЧИÇЕМ ПАРАССИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН ÇĔНĔ ЗАКОНОПРОЕКТ

ЛОНДОН, мартăн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Брюссельри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Бельги премьер-министрĕ Ван Акер правительствăна уйрăм полномочисем парасси çинчен калакан законопроекта, сенатăн пысăк пайĕ килĕшмен пирки, каялла илнĕ. Халĕ вăл ку тĕлĕшпе çĕнĕ законопроект хатĕрленĕ. Çав законопроект тăрăх вăл хăйне шаннипе шанманни çинчен ыйту лартма шутлать.

Çĕнĕ законопроект, 6 уйăх хушши пымалласкер, наци программине пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе правительствăна тата анлăрах полномочисем парать. Вăл программăна 6 пункт кĕрет. Вĕсем çаксем: çĕр-кăмрăк кăларассине вăйлатасси, спекулянтсене хирĕç çирĕп мерăсем йышăнасси, «5-мĕш колоннăн» агенчĕсемпе сутăнчăксене наказани парасси, тавар хакĕсене йĕркелесси, Бельги валютине çирĕплетесси тата союзниксем майлă вăрçа активлăн хутшăнасси.

ССР СОЮЗĔНЧЕ ПУЛНИ ÇИНЧЕН ЭЛЛИОТ ÇЫРНĂ СТАТЬЯ

ЛОНДОН, мартăн 14-мĕшĕ. (ТАСС). ССР Союзне килсе кайнă Англи парламенчĕн делегацийĕн пуçлăхĕ «Ивнинг стандарт» хаçатра ĕнер хăйĕн пирвайхи статьине пичетлесе кăларнă. Статьяра Эллиот пĕтĕмĕшле шухăшсене палăртнă. Çав пысăк çĕршывра автор курнисем пурте çар шăпи тăрăшса ĕçлеççĕ, анчах çав вăхăтрах вăл çĕршывăн çыннисем тĕнчене хăйсем искусство мастерĕсем пулса тăни çинчен те пĕлтерессишĕн. Эллиот совет халăхĕ культурăпа çав тери интересленнине палăртса хăварать. Çав интерес вăрçăн чи йывăр кунĕсенче те сӳхалманнине палăртса статья авторĕ çапла калать: «Çак ĕнтĕ вăл пирĕн аслă цивилизацине урăхлатса чечеклентерес ĕçре питĕ лайăх паллă пулса тăрать. Вăрçă хыççăнхи çулсенче çав ыйту питĕ пысăк ыйту пулса тăмалла».

НАЛОГ ИНСПЕКТОРĔСЕМПЕ АГЕНЧĔСЕН ТИМЛĔРЕХ ĔÇЛЕМЕЛЛЕ

ИШЛЕЙ. (Хамăр корр.). Районра укçа-тенкĕ пухас ĕç сӳрĕк пырать: 1-мĕш квартал планне март уйăхĕ тĕлне 41 процент çеç тултарнă.

Укçа-тенкĕ пухас ĕç юлса пыни райфо работникĕсем çителĕксĕр ĕçлениничен килет. Райфора налог инспекторĕсем 4 çын. Вĕсене уйрăм участоксем панă. М. Миронов инспектор участокне 5 ял Совечĕ кĕрет. Вĕсем укçа-тенкĕ пухас ĕçре пурте юлса пыраççĕ: 1-мĕш квартал планне пĕрле те 20 процентран ытла тултарман. Пĕрремĕш Алино ял Совечĕ вара 9 процент кăна тултарнă. Ку ял Советĕнчи налог агенчĕ Р. Кикашева халăх хушшинче сахал пулать, укçа хăй тĕллĕнех пухăнасса шанса ларать. Ял Совет исполкомĕ те укçа-тенкĕ пухас ыйтăва хăйĕн ларăвĕнче сӳтсе-явман.

Районра пухăнмалли çуртйĕрсемпе выльăх-чĕрлĕхе страхлас ĕçе начар туса пыраççĕ. Ку енĕпе Н. Шкальков инспектор ĕçлет. Вăл пĕр выльăх та страхламан. Халăх хушшинче ĕçлес вăхăта райфора ларса ирттерет.

В. ГУСЬКОВ.

Пирĕн вулав çурчĕ лайăх ĕçлет

КАЛИНИНО. Ассакассинчи вулав çурчĕ колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче политикăлла-массăллă ĕçе нумай лайăхлатрĕ. Вулав çурчĕ çумĕнче комсомолецсемпе колхоз çамрăкĕсенчен организациленĕ хор тата драма кружокĕсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем тăрăшнипе кăçал темиçе хутчен спектакльсем лартса кăтартнă, концертсем панă. Вулав çурчĕ çумĕнче политикăна вĕренмелли тата агротехника кружокĕсем ĕçлеме тытăнчĕç. Ку кружоксене коммунистсемпе комсомолецсемсĕр пуçне колхозниксемпе колхозницăсем те вĕренме çӳреççĕ.

Пирĕн вулав çурчĕ илемлĕ те таса, вăл ялти чи культурăллă çурт пулса тăрать. Унта хаçат журналсемсĕр пуçне илемлĕ литература кĕнекисене те илсе вулама пулать. Стенасем çинче—тĕрлĕрен лозунгсемпе плакатсем, çулпуçсен портречĕсем. Отечественнăй вăрçă геройĕсен пысăк витрини пур. Совет Информбюро пĕлтерĕвĕсене вăхăтра ăнлантарса параççĕ.

Вулав çурчĕн ĕçне лайăх йĕркелени пула унта колхозниксемпе колхозницăсем хавасланса çӳреççĕ.

Г. МАЛЬЦЕВ.

28 çул пĕр ĕçре

Иван Алексеевич Сырнков—51 çулхи старик. Çапах та вăл ĕçре çамрăксенчен ирттерет. Хăйĕн ĕçне яланах тĕплĕн туса пырать. Халĕ вăл Çĕрпӳри почтăра чи паллă та хисеплĕ письмоносец шутланать. Çак ĕçре вăл 28 çул пĕр улшăнмасăр ĕçлет. Çырусемпе хаçат-журналсене подписчиксем патне вăхăтра çитерсе тăнăшăн ăна почта отделенийĕ темиçе хутчен те премисем панă. Çавăн пекех хăй çӳрекен участокри ĕçсыннисем те ăна ăшшăн кĕтсе илеççĕ, лайăх ĕçленĕшĕн тав тăваççĕ.

А. ИВАНОВ.

Редакцие килнĕ çыру

Сăмахĕ пур та, ĕçĕ çук

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. Штанаш ялĕнчи потребкооперации членĕсен çĕнĕ çулта пулса иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕнче столовăй уçма йышăнса хăварнăччĕ. Столовăй уçни усăллă пулмалла. Унта Штанашри служащисем, вăтам шкулра вĕренекенсем апатланма пултараççĕ. Столовăй уçма майсем те пур. Çуртне юсаттарнă, ĕçлекенсене тупнă.

Йышăннăранпа икĕ уйăх çурă иртрĕ, анчах та столовăй çук. Хатĕрленĕ апат-çимĕçсем пăсăлса сая каяççĕ. Сăмахран, кишĕр 80 килограмм таран çĕрнĕ.

Мĕнре-ха чăрмав? Райпотребсоюз работникĕсенче. Райпотребсоюз председателĕ Фондеркин юлташ: «Столовăй пулать, уçатпăр», тесе пĕрмаях сăмах парать. Çав вăхăтрах столовăя уçас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

Сăмах пани мар, йышăннă решенисене пурнăçлани кирлĕ потребительсене.

Е. МИХЕЕВ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

Шупашкарти табак фабрикине çак пек работниксем кирлĕ: учетчик, табельщик, жестянщик, плановик, кассир, делопроизводитель, снабжени тĕлĕшпе ĕçлекен работниксем, пур тĕрлĕ специальноçсене вĕренекен учениксем (электромонтерсем, гильза машинисен тата пирус тултаракан машинăсен машинисчĕсем, механик-регулировщиксем, слесарьсем, токарьсем тата ыттисем те).

Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Чувашская, 69, Табачная фабрика, Отдел кадров.

Шемшерти колхоз шкулĕ сад-пахчи отделенийĕпе пахча-çимĕç отделенине вĕренме илет. Шкулта 5 уйăх вĕренмелле. 7-мĕш класран тата 4-мĕш класран вĕренсе тухнисене илеççĕ. Шкулта мартăн 20-мĕшĕнче вĕрентме пуçлаççĕ. Çак шкул сад-пахчи бригадирĕсене тата пахча-çимĕç бригадирĕсене вĕрентсе кăларать.

Вĕренме кĕрес текенсен çак адреспа пымалла: дер. Акулево, Чебоксарского района. Межрайонная колхозная школа.

РЕСПУБЛИКĂРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ ЯЛХУÇАЛĂХ МАШИНИСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ТАТА ХИРЕ ТИСЛĔК КĂЛАРМАЛЛИ ПЛАНА 1945 ÇУЛХИ МАРТĂН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

Районсем	Плугсене юсани	Сеялкăсене юсани	Тислĕк кăларни
Улатăр	78,5	72,0	51,1
Элĕк	58,9	76,2	67,0
Вăрнар	84,5	100,0	117,2
Йĕпреç	52,3	75,0	64,5
Ишлей	96,0	86,1	109,6
Калинино	71,6	60,0	85,9
Канаш	68,7	42,0	75,2
Куславкка	67,5	72,8	79,9
Комсомольски	85,1	100,0	35,0
Красноармейски	83,7	100,0	82,0
Хĕрлĕ Чутай	61,8	100,0	67,4
Кувакино	75,0	76,5	45,1
Сĕнтĕрвăрри	74,6	74,4	76,9
Октябрьски	65,2	90,9	77,4
Первомайски	100,0	54,8	102,0
Пăрачкав	49,6	100,0	85,0
Сĕнтĕр	85,7	91,0	45,8
Советски	51,1	52,1	80,6
Муркаш	71,7	100,0	87,7
Вăрмар	91,3	72,6	82,2
Çĕрпӳ	60,7	96,6	78,5
Шупашкар	55,6	80,7	55,0
Чкаловски	86,6	70,8	54,0
Чурачăк	90,3	95,0	93,5
Шăмăршă	57,6	38,8	83,[illegible]
Шăхасан	58,9	72,8	84,9
Çĕмĕрле	61,3	100,0	44,9
Етĕрне	70,1	66,6	81,4
Елчĕк	90,1	100,0	80,3
Тăвай	68,8	74,5	69,1
Пĕтĕмпе	72,4	79,5	77,9

ПĔР СУРĂХРАН 3 ПӲТЕК

Первомайски районĕнчи Канашел ял Совечĕн кĕрекен «Красноармеец» колхоз членĕн Е. Павлова юлташăн пĕр сурăхĕ виçĕ пӳтек тунă. Пӳтексем виçĕшĕ те сывă çитĕнеççĕ.

В. ДАВЫДОВ.

Ферма заведующийĕсен курсĕ

Çак кунсенче Çĕрпӳ районĕнчи çĕрĕç пайĕ колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисен заведующийĕсен пĕлĕвне хăпартас майпа 7 кунлăх курс туса ирттерчĕ. Курсран пурĕ 36 ферма заведующийĕ вĕренсе тухрĕç.

Курсра вĕренекенсене зоотехника правилисене вĕрентнĕ. Унсăр пуçне вĕсемпе районри ертсе пыракан работниксем калаçусем ирттернĕ.

ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Свешников юлташ Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ĕçлекенсем пысăк çитĕнӳсем туни çинчен, вĕсен умĕнче тăракан задачăсем çинчен, ВКП(б) райкомĕн пропагандăпа агитаци пайĕн пуçлăхĕ Игнатьев юлташ тĕнчери лару-тăру çинчен калаçу ирттернĕ.

Курсра ферма работникĕсем хăйсен ĕçĕнчи чăрмавсем çинчен каласа пачĕç, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса пачĕç.

Çитес кунсенче ытти колхозсенчи ферма работникĕсем валли те курс уçăлать.

П. ПАВЛОВ.

Автобус çулĕ çинче воскресник туса ирттернĕ

КӲКĔÇ. Апашри вăтам шкулта вĕренекенсемпе учительсем Канашпа Шупашкар хулисем хушшинчи автобус çулĕ çинчи юра тасатас тĕлĕшпе урoксем пĕтнĕ хыççăн воскресник ирттерчĕç. Унта 13 учитель тата аслă классенче вĕренекенсем пурте хутшăнчĕç. Вĕсем çав кун пурĕ 300 метр тăршшĕ çула юртан тасатрĕç. Воскресникре уйрăмăнах В. Константинов, Н. Степанова, А. Егорова, С. Миролюбова тата ытти юлташсем те пикенсе ĕçлерĕç.

А. ЕГОРОВА.

РЕСПУБЛИКĂРИ МТС-сенче ТРАКТОРСЕМПЕ ВĔСЕНЧЕН КĂКАРСА ĔÇЛЕМЕЛЛИ МАШИНАСЕНЕ ЮСАМАЛЛИ ПЛАНА 1945 ÇУЛХИ МАРТĂН 10-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔН ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

МТС-сем	Тракторсем юсани	Трактор плугĕсене юсани	Сеялкăсем юсани
Шăхасан	100,0	100,0	100,0
Красноармейски	100,0	92,8	100,0
Йĕпреç	100,0	92,8	90,0
Куславкка	100,4	80,4	75,0
Хĕрлĕ Чутай	100,0	73,0	76,9
Вăрмар	100,0	70,1	55,0
Вăрнар	100,0	50,8	80,0
Ишлей	95,5	44,2	75,0
Çĕрпӳ	90,9	65,8	66,5
Чкаловски	86,3	100,0	100,0
Сĕнтĕрвăрри	85,3	41,6	41,6
Калинино	84,0	64,0	60,0
Комсомольски	83,3	100,0	100,0
Елчĕк	81,9	45,7	60,0
Канаш	81,4	52,7	65,0
Элĕк	78,9	71,7	80,0
Шупашкар	77,1	64,1	71,4
Улатăр	69,0	19,2	30,0
Тăвай	61,9	60,7	85,7
Сĕнтĕр	61,5	40,0	58,3
Кувакино	59,6	30,6	90,0
Шăмăршă	59,3	43,9	78,5
Первомайски	58,5	50,0	40,0
Сурмайдан	55,0	90,2	80,0
Çĕмĕрле	54,1	15,3	15,8
Етĕрне	48,8	57,5	66,6
Сиява	46,1	32,0	60,0
Пăрачкав	37,0	42,1	53,8
Октябрьски	37,0	29,6	30,0
Пĕтĕмпе	75,9	60,5	58,6

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редакторăн — 0—67, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31

НТ 00290 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000